

*Сăнӳкерчĕкре: Василий Иванович Давыдов-Анатри Мария Максимовна мăшăрĕпе.*

# ТĂВАН ХАЛĂХПА ПĔРЛЕ

**Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши пуçарнă пархатарлă ĕçе малалла тивĕçлипе тăсакансем пурришĕн халăхăмăр чунтан-чĕререн савăнать. Чăваш литературинче Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕ хыççăнхи ăрура Васлей Давыдов-Анатри ячĕ хăйне евĕрлĕ сумлă вырăнта тăрать. Унăн кашни сăвви, кашни юрри тăван тавралăхпа, хамăр халăх шăпипе, чăваш çыннисен йăли-йĕркипе çыхăннă. Çавăнпа поэтăмăр ячĕ халăхра чыслă, çавăнпа ăна Чăваш халăх позчĕн тата Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕн хисеплĕ ячĕсене панă.**

**Чăваш çĕршывĕ ман умра**
**Утать мăнаçлăн сас парса,**
**Мухтатăп эпĕ юррăмра**
**Ăна телейлĕ кун сунса.**

**Чăваш çĕршывĕ, эс мана**
**Юратрăн, саврăн ачаран.**
**Мĕскер калам-ши халь сана, –**
**Çунат çумне çунат хушан!**

**Çак хавхалануллă йĕркесем поэтăн пĕтĕм пултарулăх çул-йĕрне уçса параççĕ. Вĕсене вуласан Патăрьел тăрăхĕнчи Арапуç тавращĕ, Пăла шывĕ, чăваш тĕнчине çыхăнтарса тăракан Шупашкар хули куç умне тухаççĕ.**

Ман патăма янă çырăвĕсенчен пĕринче Василий Иванович çапла çырать: «Эпĕ çулсерен хам çуралнă района, яла кайса ентешсене творчествăлла отчет туса паратăп, çĕнĕ произведенисемпе паллаштаратăп. Çак ĕç мана чĕрĕ хавхалану кӳрсе тăрать». Поэт шухăш-кăмăлĕ маншăн питĕ ăнланмалла. Тăван халăх фашистла вăрă-хурахпа çапăçнă чухне поэт паттăрлăх темине тĕпе хурать, юхăннă хуçалăха çĕкленĕ тапхăрта ĕçри хастарлăха мухтать, чăваш кăйкăрĕ Андриян Николаев сенкер тӳпене вĕçсе хăпарнă вăхăтра чăваш аптраманлăхне сăнарлать, СССР халăх артистки Надежда Павлова балерина тĕнчипе чапа тухнине каллех сăвăюрăпа палăртать. Тăванла халăхсен туслăхне ырлакан йĕркесем те сахал мар поэтăн. Эппин, вăл пурнăçăн тĕп ыйтăвĕсемпе пурăнать.

Ачалăха ялта ирттерни, халăх пултарулăхĕпе, ваттисен каларăшĕсемпе интересленни сăвăça мĕн ачаран хавхалану кӳрсе тăнă. Çавна май вăл кĕçĕн ăрăва та асрах тытать. «Пĕчĕк туссем», «Пирĕн телей», «Илемпи», «Çурхи кунсем», «Тимушпа унăн тусĕсем», «Сатин кĕпе», «Кĕтерук», «Илле-паттăр» тата ытти кĕнекесем çакна туллин çирĕплетеççĕ. Çыравçă проза произведенийĕсем те ăсталать, литература тĕпчевĕ енĕпе те ăнăçлă ĕçлет.

Çапах та Давыдов-Анатрин пултарулăх шайĕ юрă жанрĕнче анлăн палăрчĕ. Çĕршер сăвă çырчĕ поэтăмăр чăваш композиторĕсем валли. Ф. Лукинпа, Г. Лебедевпа, Г. Хирпӳпе, А. Орлов-Шуçăмпа, А. Токаревпа, Ф. Васильевпа, А. Асламаспа, Т. Фандеевпа, В. Ходяшевпа, А. Петровпа, Ю. Кудаковпа, А. Никитинпа çырнă юрăсем чăваш культурин чăн-чăн пуянлăхĕ пулса тăчĕç. Вĕсене профессилле ташă-юрă коллективĕсем те, халăх пултарулăх ушкăнĕсем те хаваспах хăйсен репертуарне кĕртеççĕ, хамăр тăрăхра кăна мар, республика тулашĕнче те кăтартаççĕ. Халăх хăй те çав юрăсене ĕçре те, уявра та хавхаланса шăрантарать.

Нумаях пулмасть Ваçлей пиччепе чей чашки умĕнче калаçса лартăмăр. Пĕрне-пĕри нумайранпа пĕлнĕ май калаçмалли тупăнсах пычĕ. Ульяновск облаçĕнче чăваш культурин кунĕсене ирттерни, сăмахран, халĕ те куç умĕнчех. Чăнлă районĕнчи пĕр ялта халăх клуба кĕреймен пирки поэт хăйĕн сăввисене урамра вуларĕ. Чунтан хĕпĕртесе йышăнчĕç кӳршĕ облаçри чăвашсем Шупашкар поэчĕн сăввисене. Сăмах ăсти Хусанта та, Ĕпхӳре те, Чулхулара та, Йошкар-Олара та, Минскра та, Киевра та чи сумлă сценăсем çине тухнă, Мускавпа Ленинград халăхĕ те ăна хапăл туса йышăннă.

Раштав уйăхĕн вĕçĕнче Василий Иванович 80 çул тултарать. Ултă теçетке тапса туртать вăл тăван литература лавне. Апла пулин те ĕçлет, ялсене те час-часах тухса çӳрет. Сăмахран, иртнĕ уйăхра кăна-ха вăл Красноармейски районĕнчи Чатукасси ялĕнче пулчĕ, хăйĕн юлташĕн Филипп Лукин композиторăн музейне уçнă çĕрте хĕрӳ сăмах тухса каларĕ. Вăл Шупашкарти фабрикăсемпе заводсенче те, шкулсемпе ача сачĕсенче те яланах кĕтнĕ хăна шутланать.

Ырми-канми поэтăмăра ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунас килет.

**Илья ПРОКОПЬЕВ**